ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ФИЗКУЛЬТУРА ТАТА СПОРТ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 6 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Физкультура тата спорт çинчен" 2008 çулхи çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 31 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2008, 76, 78 №-сем; 2009, 82 №; 2011, 89, 91 №-сем; 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5, 12 №-сем; 2014, 11 №; 2015, 2, 10 №-сем; 2016, 3, 12 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, ака уйăхĕн 4-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, авăн уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2020, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2023, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ) 6 статйине çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1-мĕш пайăн 2^2-мĕш пунктĕнче "массăллă спорта аталантарма пулăшасси," сăмахсене "массăллă спорта аталантарасси тата унпа усă курма пултарассине тивĕçтересси, аталантарма пулăшасси" сăмахсемпе улăштарас;

2) 3-мĕш пая çакăн пек çырса 6-мĕш пункт хушса хурас:

"6) çарпа çыхăннă тата службăпа çыхăннă спорт тĕсĕсене аталантарас ĕçе пулăшма.".

2 статья

Çак Саккун, çак Саккунăн 1 статйин 2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче вăя кĕрекен 2-мĕш пункчĕсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хулли
2024 çулхи пуш уйăхĕн 29-мĕшĕ
17 №